Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ

Республика шайĕнче ирттерекен «Чăвашла уяв янратăр!» сценарисен конкурсĕ

Номинаци:

Шкулччęнхи вĕренӳ организацийĕсенче ирттерекен уявсен сценарийĕсем

Тема:

# Ту-ту-ту, ту-ту-ту! Çулна лайăхрах асту!

**Сценарин авторĕ**: Макарова Вера Степановна
Муркаш районĕнчи Москакасси ялĕнчи
8-мĕш номерлĕ«Колокольчик» ача сачĕн,
музыка ертӳçи,8-960-302-82-73, ds8-kolokolchik@mail.ru

**Шупашкар**
**2019**

Муркаш районĕнчи
Москакасси ялĕнчи
8-мĕш номерлĕ
«Колокольчик» ача сачĕ.
В.С. Макарова музыка
ертӳçи йĕркеленĕ.

**Ту-ту-ту, ту-ту-ту! Çулна лайăхрах асту!**

*Ачасем музыка залне «школа пешехода» (кĕвви С.Миролюбовăн) ятлă кĕвĕпе пуçтарăнаççĕ.*

**Ертӳçĕ.**

Кунĕ ырă пултăр,
Кăмăлĕ савăк пултăр!
Утатр-и, чупатр-и?
Мĕнле пурăнатăр, ачасем?

- Пĕлетĕр-и, паян асамлă майпа тĕп хуламăра Шупашкара çитсе курма май пур. Эсир хирĕç мар-и?

Шупашкар – пысăк хула. Пĕрре кайсах йăлтах пăхса-курса тухаймăн!

Эпир сирĕнпе автовокзала тата аэропорта çитсе курăпăр.

Асăрхаттарса калам, хулара çӳремешкĕн çул йĕркине пĕлмелле, вырăсла вăл «правила дорожного движения» пулать. Хăшĕ-пĕрисене аса илер!

Акă «Асăрханăр, ачасем!» паллă.

Маша, çак паллă çинчен каласа кăтарт-ха!

**Ача.**

- Ачасем текен паллă,
Шухăшламасăрах паллă.
Кунта ачасем нумай,
Тимлĕ пуласчĕ пĕрмай!

**Ертӳçĕ.**

Акă вара тепĕр паллă. Ку мĕне пĕлтерет?

- «Сиплев çурчĕ» паллă.

Хĕрлĕ хĕрес – мĕнле паллă?

Сиплев çурчĕ çакă паллă.

Сана унта пулăшĕç,
Сыватмашкăн тăрăшĕç.

**Ертӳçĕ.**
Çул çинче тĕрĕс çӳреме пулăшакан паллăсем питĕ нумай. Хăшĕ-пĕрисемпе хулара паллашăпăр. Халĕ вара автобус çине ларар.
Ак автобус сас парать,
Вырнаçма ирĕк парать.
Шупашкара çул тытать.
«Вĕçтерсе» çеç вăл пырать!
*(Экран çинче аслă çул – тĕрлĕ машинăсем, автобуссем чупаççĕ.)*
**Ертӳçĕ.**
Инçе çула кĕскетсе пĕр çаврăм юрă юрлар.
***Автобус юрă.*** *(Савви А. Кăлканăн, кĕвви Г. Лисковăн)*
*(Экран çинче «Автовокзал».)*
*Микрофонпа ак çапла калани янрать:*
«Шупашкартан Канаш хулине каякан сакăр вуннăмĕш номерлĕ автобус вунă сехет те вăтăр минутра пиллĕкмĕш платформăран каять. Телейлĕ çул пултăр!»
**Ертӳçĕ.**
Курăр-ха кунта мĕн чухлĕ автобус! Ку вокзалран пирĕн республикăри тĕрлĕ ялсемпе хуласене ларса кайма пулать. Çавăн пекех аслă çер шывăмăрăн тĕрлĕ хулисене те çак вокзалранах автобуспа ларса кайса çитме пулать.
Халĕ вара Шупашкар хĕрринче вырнаçнă аэропорта çитсе курар.
*(Экран çинче самолетсем вĕçсе хăпарса кайни.)*
**Ертӳçĕ.**
Самолет тӳпене вĕçсе хăпарса кайиччен питĕ пысăк хăвăртлăх пуçтарать. Çапла тумашкăн ăна валли ятарлă «шасси» пур. Самолетсемпе вара хамăр çĕр шыври хуласене кăна мар, çĕр чăмăрĕ çинчи хăть мĕнле вырăна та çитме пулать. Сăмахран Америкăна е Африкăна. Сирĕн хушăра летчик пулас ĕмĕтлĕ ачасем пур-и?
Самолĕт çинче хăюллă та шанчăклă пилотсемсĕр пуçне тӳпере лăпкă вĕçме стюардессăсемпе стюардсем пулăшаççĕ. Сиртен кам самолетпа вĕçсе курнă?
**Ертӳçĕ.**
Чимĕр-ха, ку тата мĕн япали? Самолет-и ку е вертолет?
Ара, ку Карлсон-çке! Мĕн ĕçлет вăл кунта? *(Зала Карлсон кĕрет. Пропеллерĕ çаврăнмасть. Аллинче пушă варени кĕленчи.)*

**Ертӳҫӗ.**

Карлсон, ырӑ кун пултӑр! Мӗншӗн питӗ тунсӑхлӑ Эсир?

**Карлсон.**

Кунӗ чӑнах та лайӑх, хӗвеллӗ! «Вӗҫме» ним те чӑрмантармасть. Хамӑн кӗҫӗн юлташ патне (эпӗ ӑна юратса Малыш тесе чӗнетӗп) ҫуралнӑ кунпа саламлас тесе тухсаччӗ. Эх… заправка пӗтрӗ. Хӑвӑрах куратӑр, мана бензин тавраш кирлӗ мар, манӑн пропеллер пылак таврашӗпе анчах ӗҫлет.

Ҫуран каяс? Ай-яй, пит хӑрушӑ. Урамра мӗн чухлӗ машина! Те таптаса кайӗҫ тата!

**Ертӳҫӗ.** Ан пӑшӑрхан! Эпир пӗчӗккӗ пулсан та ҫӳреме самай пӗлетпӗр. Ну, тимлӗ пул, Карлсон!

Акӑ светофор *(экран ҫинче курав.)* Вӑл ҫул ҫинче йӗрке тытса пыракансенчен пӗри пулать. Светофор ҫинчен малалла Ваньӑпа Саша каласа параҫҫӗ.

**Светофор**

**Ача.** Светофорӑн виҫӗ ҫутӑ:

Хӗрлӗ, сарӑ, симӗсси.

Пур ҫутти те питӗ кирлӗ –

Нихӑш те ҫук ытлашши!

**Ача.** Симӗс ҫутӑ – уҫӑ ҫул.

Сарӑ ҫутӑ – хупӑ ҫул.

Хӗрли: «Чарӑнсамӑр», - тет.

«Тимлӗрех пулсамӑр!»- тет.

**Ертӳҫӗ.** Светофор куҫ хӗсет.

«Малалла кайсамӑр»,- тет.

Симӗс ҫутӑ, тав сана.

Эп кӗтсеччӗ пит сана!

Халӗ вара Карлсона пулӑшса, хамӑрӑн пӗлӗве ҫирӗплетсе ***«Хӗрлӗ – сарӑ – симӗс»*** *ятлӑ вӑййа* чӗнетпӗр сире.

Симӗс тӗс ҫуталсан – ҫавракара утӑпӑр.

Ҫарӑ тӗс пулсан – «пружинки» тӑватпӑр.

Хӗрлӗ тӗс ҫуталсан – вырӑнта тӑп чарӑнса тӑрӑпӑр.

**Карлсон.** О! Питӗ хаваслӑ вӑйӑ-ҫке ку!

**Ертӳҫӗ.** Хаваслӑ ҫеҫ мар, усӑллӑ вӑйӑ!

**Карлсон.** Эх, пӗлесчӗ сирӗн, манӑн хырӑм мӗнлерех выҫса кайнине!

**Ертӳҫӗ.** Ан кулян, сана ҫул ҫинче ак ҫакӑн пек паллӑ пулӑшӗ. Маша, паллаштарсам!

**Ача.** «Апатлану» палли.

Çул çинче хырăм выçсан,

Çакăн пек паллă курсан,

Тĕрлĕ апат эсĕ çиййĕн,

Çитес çĕре тутă çитĕн!

**Карлсон.** Ха, мĕнле «тутлă» паллă ку! Хм, хамăн юлташăма, Малыша ача садне леçме те пултаратăп малашне. Анчах çул урлă мĕнле каçас?

**Ертӳçĕ.** Ну, кăна сана ăндрюша лайăх ăнлантарса пама пултарать.

**Ача.** «Çул урлă каçмалли паллă».

Çул урлă каçан пулсан,

Питĕ хытă асăрхан!

«Зебрăпала»усă кур!

Ун «каçарма» ирĕк пур!

**Ертӳçĕ.** Пăхатăп та, Карлсон, санăн кăмăл кăштах çĕкленчĕ пулмалла. Итле-ха, çул çинче çӳреме пулăшакан паллăсем çинчен ак çапла юрлатпăр эпир!

***«Песенка дорожных знаков»*** *(Савви В.Мурзинăн, кĕвви С. Миролюбовăн)*

**Карлсон.** Вĕрентсен упа та вĕренет теççĕ. Эпĕ те ку паллăсене вĕренсе юлтăм.

**Ертӳçĕ.** Аван-аван! Халĕ вара «Лартăмăр та кайрăмăр» вăййа выляма чĕнетĕп. Ачасем, вылянă чух хăлхисене чанк тăратса итлемелле пулать. Унсăрăн авари пулма пултарать. Акă эсир тăваттăн, пиллĕкмĕшне руль тыттарăпăр. Вăл – водитель.

Çакăн пек хушусем пулĕç:

Сулахаялла – налево

Сылтăмалла – направо

Каялла – задний ход

Малалла – вперед.

Ларăр машина çине, кайрăмăр! *(3-4 хут выляма юрать.)*

**Ертӳçĕ.** Ну, мĕнле, Карлсон тус, йăлтах йĕркеллĕ-и? Çитес çĕре санăн та лайăхах çитмелле пултăр! Акă сана çĕр çырли варенийĕ. «Заправка» ту! Тата çул йĕркине вĕренмешкĕн «Лото».

«Заправка» палли çинчен сана Миша каласа парĕ.

**Ача.** Çул юхать, юхать.

Машини чупать.

Чупса ывăнсан

Çимелли ыйтать.

Çăкăр – кулач мар,

Вăл бензин ыйтать.

Бензинне ярсан,

Тата хыт чупать!

**Ертӳçĕ.** Карлсон, халĕ вара çуран çӳреме те кăштах вĕрентĕн.

**Карлсон.** Ну, тинех Малыш патне çуран та, «вĕçсе» кайма та пултаратăп.

**Ертӳçĕ.** Çитес çĕре чипер çит, Карлсон! Тепре куриччен! *(Карлсон тухса каять.)*

**Ертӳçĕ.** Паян Шупашкара,  экскурсие килсе чылай çĕнĕ япала пĕлтĕмĕр. Вĕсем сире пурнăç тăршшĕпех кирлĕ пулĕç.

Халĕ автобус çине ларса хамăрăн юратнă ача садне таврăнар!